Карим М. Халăх чысĕ, наци пуянлăхĕ : [поэт çуралнăранпа 110 ç. çитнĕ май] / М. Карим
// Тăван Атăл. – 2000. – № 1. – С. 16-17.

Мустай КАРИМ,
Пушкăрт халăх поэчĕ



# ХАЛĂХ ЧЫСĔ, НАЦИ ПУЯНЛĂХĔ

Хаклă тăвансем! Мĕнпур аппам - йăмăкăмпа пиччем - шăллăм! Чăвашсем! Константин Иванов хăй халăхĕн ятне - чăваш сăмаха - питĕ юратнă, ăна вăл техĕмне пĕлсе, савăнса, тĕлĕнсе каланă, унпа мăнаçланнă, тепĕр чухне ӳпкелесе - йĕплесе те илнĕ. Вăл хăй нацине çул кăтартса пыраканĕ пулнă, çавăнпа ăна ăшă сăмахпа хавхалантарма та, вĕрентсе калама та пултарнă. Ку вăл - аслисен тивĕçĕ. Иванов çав тивĕçпе усă курнă. Ĕнтĕ мана пушкăрт делегацийĕ хушнине пурнăçлама, Константин Васильевичăн çуралнă çĕрĕн саламне калама, мĕнпур Чăвашъене Пушкăртстан ячĕпе пуç тайма ирĕк парсамăр. Кунта пирĕн çĕр хĕрĕх писательтен тăракан йышран кашниех килсе курас кăмăллăччĕ, анчах шăпа ырлăхĕ тăвата çынна çеç тухрĕ - Гайса Хусаинов профессора, пирĕн хӳхĕмрен те хӳхĕм икĕ поэта Равиль Бикбаевпа Асхаль Ахметкужина тата мана. Хăвăрах тавçăратăр пуль, пушкăртсем инçе çула кайма хатĕрленнĕ чух нихçан та начар учĕсене йĕнерлемеççĕ.

Шăп тăвата çул каялла Хусанта Габдулла Тукай юбилейĕнче пулса çапла çунатлансаттăм. Паян та пĕрлехи уявăмăрта чунра - чĕремре çавнашкал çĕкленӳ-хĕпĕртӳ таппине туйса тăратăп. Хăвна савăплă та пархатарлă ялала çумĕнче шутлани вара чуна та, ăс-хакăла та яланах хăпартлантарать. Константин Иванов, темлере пĕрре килекен ытти аслă çынсем пекех, тӳрех пысăк ăста пулса çуралнă. Калама çук кĕске пулнă ун кунĕ-çулĕ, çавăнпах-тăр сасă лартасси те, хăнăху тапхăрĕ те хăй тĕнчене киличченех пулса иртнĕ. Шутлăр--ха: "Нарспи" пичетленсе тухнă чухне вăл вунсаккăрта кăна пулнă. Константин Иванов кĕтречĕ, тем тесен те, чăваш халăхĕн чунĕнче тахçантанпах вăй илсе пурăннă, мехел çитнĕ самантра, çут тĕнче умне ĕмĕрлĕх парне пулса тухнă.

Хăй вăхăтĕнче эпир Рахман Кали

поэтпа "Нарспие" пушкăртла куçарсаттăмăр. Мĕнле калас, çавăн чухнехи хавхалану маншăн кăвак хуппи уçăлнипе пĕрех пулчĕ.

Мана "Нарспи" поэмăра лирикăлла тата философилле йĕрсен килĕшӳлĕхĕ тĕлĕнтерет. Халăх пурнăçне, йăли-йĕркине, çутçанталăка сăнлассине мĕн тери пысăк ăсталăхпа эрешленĕ поэтăмăр, этемĕн чунне мĕнле витĕррĕн курса тăнă вăл. Сăвăлла пуплевĕ епле яка та çыпăçуллă тата! Шăнкăр шыв пек юхса тăрать вĕт! Кашни йĕрки, кашни сăмахĕ шухăш асамлăхĕпе, кĕвĕ илемлĕхĕпе тыткăна илет. Пĕрре лекетĕн те çав юхăма - хăтăлаймастăн!

Яш чухне эпĕ Слакпуç тăрăхне, поэтăн пархатарлă çĕршывне пĕрре кăна мар çитсе курнă, унти анлă уя-хире, вăрман-ĕшнене, çăлкуçсемпе сенкер тӳпене пуç тайнă, шăкăл та шăкăл чăваш чĕлхипе калаçнине чун каниччен итленĕ.

Константин Ивановпа унăн чаплă поэми çинчен Ухсай Яккăвĕ мана 1939 çултах каласа панăччĕ. Пыратпăр, хайхи, пĕррехинче Фрунзе урамĕ тăрăх, Хĕлип Вуколов - Эрлик патне хăнана каятпăр. Кунĕ уяр, таса, урамра шыв шăнкăртатать. Пĕтĕм Ĕпхӳ темĕнле сенкер сунчăк айĕнчи пек туйăнать. Шăпах "Нарспин" пĕрремĕш йĕркинчи уйăхчĕ ун чухне, пуш уйăх. Яков Гаврилович мана çула май поэмăн малтанхи сыпăкĕсене вуласа пачĕ, çавăнтах пушкăртла та куçарса пычĕ. Кĕçех эпир Пушкăрт çыравçисен союзĕнче хамăрăн мухтавлă ентешĕн аллă çулхи юбилейне хатĕрленме пикентĕмĕр. Халĕ акă ĕнтĕ унтанпа тата тепĕр аллă çул иртсе кайрĕ. Вăхăт та, çул-йĕр те поэт сăнарне хупласа хураймĕç. Хураймĕç çеç те мар, ăна халăхăмăрсен историйĕпе тĕнчен ĕмĕрхи пăлханăвĕ умĕнче тата çуттăнрах та витĕмлĕрех курăнмалла турĕç.

Ивановăн литературăри еткерлĕхĕ калăпăшĕпе илсен пысăках мар, анчах хăй вăл, чăваш халăхăн чунлăх шайне палăртакан чи çӳллĕ виçе пулса тăнă май, хăйĕн еткерлĕхĕнчен те пысăкрах-тăр. Вăл çырнисем те, хăй те, унăн çутă сăнарĕ те чăваш халăхĕн çĕнĕрен те çĕнĕ ăрăвĕсене çĕклеççĕ, пĕр çутă пулăма çаврăнса наци ăстăвăмĕпе таса кăмăл-сипет тытăмне йĕркеленме пулăшаççĕ.

Хаклă чăваш тусăмсем! Эсир Константин Иванов вилĕмсĕрлĕхĕ умĕнче пуç тайни, унпа савăнса мăнаçланни пирĕншĕн те ырă та сумлă япала. Чыс та хисеп сире, поэт тăхăмĕсем. Малашне те унăн хĕвеллĕ ăс-хакăлне, аслă чун туртăмне, çулăмлă хавалне таса упрани сирĕн нацилĕхпе халăхлăх туйăмĕсене çĕклĕ.

Тавтапуç сире.

1990 çулта Шупашкарта калана сăмахран.